С(Чув.)
К Э67
21298

ВАСИЛИЙ ЭНТИП

# ТУСЛĂХ КĂШĂЛĔ



С (чув) 2
Э 64

Э $\frac{0762-141}{М\ 136(03)-77}$ 87–77

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1977 ç.

К С(чув)
Э67

ВАСИЛИЙ ЭНТИП

# ТУСЛĂХ КĂШĂЛĔ

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1977



# АЧАЛĂХ УРХАМАХĔ



21298-чв
Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО
ПРОВЕРЕНО
2007



## I

Тăван кĕтес — асаилӳ тĕнчи,
Ачалăх — ун асран кайми юмахĕ.
Унта чĕнет кĕтӳçĕ шăхличи,
Сăрнай кĕвви, сăпка юрри сăмахĕ.
Чан çапнăн, авăтса ярать автан,
Çăвать хĕвеллĕ çумăр шăпăр-шăпăр,
Чĕнӳллĕн кĕçенсе тухать таçтан
Ачалăх урхамахĕ тăпăрт-тăпăрт.
Епле хитре ун çулăм пек çилхи!
Епле вăрт-варт ун çиçĕм пек çуначĕ!
Хум-юхăм еверлĕ чуппи-çăрхи!
Хĕм сирпĕтет такан!.. Епле-ши ячĕ?
Ачалăх урхамахĕ — Çилçунат!..
Епле унпа ман туслашасчĕ, теттĕм.
Вут-ĕмĕт çунтаратчĕ ман чуна.
Ах, тутлă тĕлĕк тĕллентернĕ тертĕм!
Тăван кĕтес — асаилӳ тĕнчи,
Ачалăх — ун чи кăмăллă юмахĕ.
Унта чĕнет асамăç шăхличи,
Чи çепĕç юрăсен кĕвви, сăмахĕ...

## II

Умра — асри пĕрремĕш курăну:
Улма чăпар ут тулхăрать хаваслăн.
Шлем тăхăннă атте чĕнет: «Эй, ну!
Тапран, тăванăм! Çулĕ пултăр аслă!..»
Тĕрленĕ хысхă ашăклă çуна
Карт! туртăнса юрла пуçлать те юрă,
Атте тилхепине парать мана:
«Тыт çирĕпрех. Кăшт карăнтар-ха... Юрĕ».
Чупмасть — вĕçет çунатлă урхамах,
Сăмси-çăварĕнчен палкать пăс-тĕтĕм!
Епле аван!.. Ку — тĕлĕк халь, юмах:
Асри тĕнче — инçе, тӳпи ун тĕксĕм...
Ак урăх курăну тухать ума.
Килте. Çынсем юрлаççĕ те йĕреççĕ.
Мĕн чухлĕн килнĕ! Мĕншĕн? Мĕн тума?
«Аттӳ вăрçа каять — курса юл»,— теççĕ...
Вĕри сухалĕпе пите ĕнтсе,
«Сыв пул» тесе, атте пуçран лăпкарĕ.
...Халь те янрать-ха шăнкăрав, чĕнсе,—
Салтак тăван килне таврăнаймарĕ...





## III

Епле кĕтеттĕм эп вăл килессе!
Салхуллăн пуйăс сассине итлеттĕм.
Çуран çын, лав-и,— «ман атте!» тесе,
Çулсем çинчен касчен куçа илместĕм.
Илемлĕ шĕвĕр тăраллă шлемпа,
Çĕн шинельпе вăл куç умне тухатчĕ...
Хăрушă вăрçăн сив шевли — шăпа!—
Ачалăх телейне хăртса хăварчĕ.
Йăлт хăшкăлчĕ кĕте-кĕте анне:
«Ах, çирĕ-шим пусне эсрел çич ючĕ!..»
Салтак тăпри. Ăçта вăл? Вырăнне
Тупайăп-ши? Асра чĕр сăн çех юлчĕ...
«Чĕре ман тапĕ ывăл кăкринче»,—
Тесе вăл çырнă... Тапĕ, ывăл ар-тăк.
...Хăй лартнă сар йăмра хăвăлĕнче
Ик çырune эп упраса хăвартăм.
Вĕçме пуçланă чĕпĕ пек вара
Ласка турат çине эп улăхаттăм —
Хам ятăма шыраттăм çырура...
Çаплах вĕрентĕм вулама хам халлĕн.

## IV

Мăн асаттешĕн урхамах тени
Кунçулĕнчи чи пысăк ĕмĕт пулнă.
Ут кĕтĕвĕ хир тăрăх вирхĕнни
Чи авалхи юрăсенче çех юлнă.
Çапах та, хресченле телей пӳрсен,
Ун витинче кĕçенкеленĕ ăйăр.
Тухман-и утлă паттăрсем пиртен?
Çич ют эшкерĕ тапăнма çех хăйтăр!..
Ентешĕм вырăс пиччĕшпе пĕрле
Аркатнă ордана: пĕт, пусмăр, хурлăх!
Е аслă Петĕрпе пăхаттирле
Тустарнă сĕмсĕр шведсене хăюллăн,
Хаяррăн тӳпеленĕ француза...
Ирĕклĕхе юрат, сыхла — чап кайĕ,
Шăп çавăнпа çут хĕçĕпе сулса
Çунатлă учĕпе вĕçет Чапаев.
...Аттем ялта ут пăхнă пит ăста
Е тырă акнă-вырнă, утă пухнă.
Тăван çĕршыв чĕнсессĕн, фашиста
Сирпĕнтерме урхамахпа вăл тухнă.

## V

Атте шлемне мăнаçлăн тăхăнса
Пĕррехинче эп «ăйăр» йĕвенлерĕм —
Маттуррăн кĕçенсе те тулхăрса
Урамсенче ĕрĕхтерсе çӳрерĕм.
Сыхлан, фашист — мăян та талпиçен!—
Атакăра халь утлă çар салтакĕ!
Айкашрăм хĕç сип-симĕс пуличчен,
Ман урхамах — çатан карта патакĕ...
Анчах пĕр ĕмпичче, çавна курсан,
Хĕрӳ вăйăйа ĕмĕрлĕхе вĕçлерĕ.
— Итле мана: патак тек ан утлан —
Мухтавлă йĕкĕт пулаймастăн,— терĕ.
Йăли çапла... Йăх пусĕсем хушман:
Хăранă утсăрах тăрса юлмашкăн...
Пыр витене ватта кăшт пулăшма —
Аттӳ урхамахне пăхма... Ан ашкăн...
Атте урхамахне?! Чим, колхозра
Ăçтан ун пек ут пултăр? Ай, чее-çке...
— Аттӳ пăхса ӳстернĕ ăйăра
Ялта,— тет вăл,— çынсем çапла чĕнеççĕ...



## VI

Хĕвел сăрт-ту хыçне тапса сиксен,
Хĕлхемлĕ сулхăн сапнăн Алтăр çăлтăр,
Эп çывăрмасăр выртрăм чылайччен —
Ача епле ĕмĕтленмесĕр чăттăр!
Миçемĕш хут ак, куç умне тухса,
Улма чăпар мана чĕнсе кĕçенчĕ,
Чечеклĕ улăх çийĕпе юртса
Сенкер тĕтре ăшне вĕçсе çĕкленчĕ...
Ак тĕлĕрсе кайсан та тĕлĕкре
Вăл чупрĕ пек шур кăпăклă хум çийĕн.
Унта чĕвен те тăчĕ вăл хитре,
Çилхи çилпе туранчĕ сийĕн-сийĕн.
Ак аçа-çиçĕм пĕлĕчĕ айне
Хăрушă вăрçă хирĕ тухрĕ хурлăн —
Çунатлă ут аманнă аттене
Хăтарчĕ асамат кĕперĕ урлă...
Вăрантăм эпĕ, хăраса кайса,
Лупас айне анса, çăл шывĕ ĕçрĕм,
Пите-куçа çуса, килтен тухса
Лаша вити енне васкавлăн вĕçрĕм.





## VII

Шерте карталлă аслă ут вити
Сăрт тӳпине вырнаçнăччĕ пит меллĕн.
Тăван тавралăхăм таçта çити
Унтан курнатчĕ анлăн та илемлĕн.
Юханшывсем, хирсем, сăрт-ту тӳпи,
Вăрман та улăх куç умне тухатчĕ...
Сенкер инçет... Унта эп çитĕп-и?..
Лĕп шывлă Çарăмсем умрах юхатчĕ!
Раççей варри... Йăмралла кивĕ ял...
Мухтавлă улăп тăприсем... Çул аслă...
Тăван çĕршыв — чи чаплă, таса ят!
Мĕн пĕчĕкрен вăл маншăн пулнă хаклă.
...Ем-ешĕл сăрталла çĕкленнĕ май
Ăна сăнатăп тĕлĕнсе, хаваслăн:
Епле ун катинче илем нумай!
Епле тӳпи ун çӳллĕ, çĕрĕ аслă!
Йĕри-тавралăх — ăшă канăçра.
Хĕвел тухасшăн — час вăранĕ халăх.
...Кĕрлет хăрушă вăрçă анăçра.
Аса илсен, салхуланать ачалăх.

## VIII

Пура вите... Кĕретĕп шикленсе.
Анчах мĕскер ку? Пӳлмексем пуш-пушă!..
Тăратăп макăрас пек кӳренсе,
Кăштах, тен, сӳрĕклентĕм те пĕр хушă:
Шӳтлерĕ-шим Хĕветĕр ĕмпичче?
Ват çын хăй — пĕчĕк ачаран куласшăн...
Тем, йăрр! юхса, пĕçертрĕ ман пите.
Эх, çакăнта тăван атте пулсассăн!
Сасартăк укăлчаллă çул енче
Лаша кĕçенчĕ те — чĕре кăрт! сикрĕ.
Ак, тăпăрт-тăпăртик! кĕвĕленсе,
Вăйланчĕ савăк кĕвĕ — çывăх! çитрĕ!
— Лăплан, айван, путек пек ан чĕтре,—
Эп хама хам йăпатнă пек пулатăп.
Çук, пурпĕр кăкăра тӳнккет чĕре —
Улатакка чĕппи... Тен, эп юлатăп?!
Ак кĕчĕ вирхĕнсе яла кĕтӳ!
Улма чăпар ут — чи малта! Палларăм!
Кур, савăн — умăнтах-çке ĕмĕтӳ!—
Епле чупать вăл çăмăллăн, патваррăн.

## IX

— Ытла та каçĕ ырă выртмара.
Кăшт пулă хыпрĕ авă — çилсĕр шуçăм,—
Хĕветĕр ĕмпичче кункăрара
Вылятрĕ пулă. Кулчĕ ăшшăн, уççăн...
Эп хумханса сăнарăм йăйăра:
Ури епле çинçе те тăпăл-тăпăл,
Кашниййĕ — пакăлчак таран хура!
Тип-тикĕс каснă çилхине: ан тăпăл;
Ăмри те çӳллĕ, сарлака кăштах;
Илемлĕ мăйĕ юхăм евĕр авăк;
Ăратлă пуçĕ пысăк мар пачах;
Çамки çинче — пĕр пĕчĕк пурçăн явлăк;
Кӳлемлĕ пĕвĕ те епле яштак;
Хӳри — хура; хăлхи вылять пĕрвĕçĕм;
Каçхи тӳпе пек куçĕ çех кăштах
Кичем пек туйăнать, кăштах, тен, вĕчĕх...
Епле, епле унпа ман туслашас!—
Пăхайăттăм ăна ун чух хамах эп.
— Пул эсĕ маншăн чăн-чăн тус, лаша,
Пул ĕмĕтри ачалăх урхамахĕ?!.

## X

Атте пăхса ӳстернĕ йăйăра
Юратрăм чĕререн, çавна кура-ши
Мана вăл хăвăрт хăнăхрĕ вара —
Сăмах чĕнсессĕн, кĕçенсе пыратчĕ.
Кĕреттĕм ăшă, хӳтĕ пӳлмеке,
Анне пĕçернĕ «премĕк» хыптараттăм,
Ут çывăхне лартаттăм чикмеке —
Шур çилхине йĕс турапа тураттăм.
Е хыркăчлаттăм тимлĕн, тăрăшса,
Е ши-ши! шăхăрса шыв ĕçтереттĕм,
Хурса параттăм утă сырăша,
Хыраттăм йывăç урая черетлĕн.
Унтан, каска лартса, хăра-хăрах
Хăтланнă йăйăр урлă уртăнма та,
Анчах хăйман-çке утланма вăрах —
Ăшра вăрçаттăм хама хам: «Тăм паттăр...»
Сăпайлăн йăпататчĕ ĕмпичче:
«Ытла ир вĕçекен çунатсăр юлнă...»
Ун чух эп каяйманччĕ-ха çичче,
Аттесĕр ӳснĕ — тен, хăюсăр пулнă...





## XI

Пĕррехинче ирех, çава илсе,—
Çанталăк кăнтăрла тăратчĕ шăрăх,—
Улма чăпар урхамаха кӳлсе,
Вĕçтертĕмĕр вăрманалла çул тăрăх.
...Уçланкă. Курăк сывлăмлă, йĕпе.
Сараççĕ пыллă чечексем ыр шăршă.
Çулать тин çех туптанă çавипе
Ыр ĕмпиччеçĕм ут валли. Пит ăшă!
Паккуссене пухап та çĕклемпе
Вăй çитнĕн урапа çине тиетĕп,
Тип кĕпçерен тин тунă шăхличпе
Чунра çуралнă кĕвĕ кĕвĕлетĕп...
Пултран, кăшкар тататпăр та — яла.
Ĕшеннĕ ĕмпичче чаккать вут чулĕ,
Кăшт шикленетĕп: çул анаталла,
Ан ĕрĕхтĕрччĕ ăйăр — тем те пулĕ!..
Ман аллăмра татах чĕн тилхепе!
Атте çех çук çумра... Ăçта вăл халĕ?
Вылять çил урхамахăм çилхипе.
Е тунсăхлă кăштах, е — ырă, канлĕ...

## XII

Ачалăх ĕмĕтне пурнăçлакан,
Тен, никамран хаваслă та телейлĕ.
Эй, саламла мана халь, куракан!—
Епле утланнă ăйăра эп меллĕн!
Юртмасть — вĕçет çунатлă урхамах,
Ут картинче те мар пек — пĕлĕт урлă!
Ун чĕлпĕрне эп тытнă — кур!— хамах.
Çил шăхăрать хальччен илтмен çĕн юрă.
Памасть ута асма та ĕрĕхме
Ман сыхлă ĕмпиччемĕн чĕн пăявĕ.
— Çитмен-ха вăхăт ирĕклĕн вĕçме!—
Кулать вăл... Пурпĕр шеп самант уявĕ!
Миçе çавра эп ут юпи тавра
Тăвайрăм-ши?— пуç çаврăна пуçларĕ.
Ак çĕр те тикĕт пек юхать... Вара —
Унта эп тӳнтĕм... Йĕтĕм: намăс мар-и!
— Э-э, типĕт-ха куç сывлăмне часрах,—
Эп илтрĕм.— Чăн-чăн йĕкĕтсем йĕмеççĕ.
Çаралнă шăпăр мар-çке урхамах —
Арсем те ун çинчен хăш чух ӳкеççĕ...

## XIII

— Пуçтарăн, харсăр йĕкĕт, выртмана!—
Kaçкŷлĕм иртнĕн ĕмпичче каларĕ.
— Каятпăр Çарăмсем хĕрне — чуна
Пит ăшăтать унти кăвайт кăварĕ...
Ак эпĕ вичкĕн урхамах çинче!
Те ут ури сасси ку — тăпăрт-тăпăрт!—
Те ман чĕре тапать?.. Итле, тĕнче!
Юрлас килет — çапах пыратăп шăпăрт.
Хам хаваслишĕн хам та вăтанап,
Саманчĕ те чуна уçма пит меллĕ...
Пĕлетĕп: вăрçă тамăкпа танах —
Пулаймăн вăл пур чух тулли телейлĕ...
Анчах саманчĕ чăннипе пит шеп!
Сирет хуйха-суйха та ун тивлечĕ.
...Ак эп утпа Çарăмсемре ишеп!
Ак, вут умне ларса, юмах итлетĕп —
Паллах, çунатлă урхамах çинчен:
Телей шырать хуçи ун, улăп-каччă...
...Кайран — сăнатăп тŷпене темччен:
Унта вĕçет шух шухăшсен хăлачĕ...

## XIV

Сас панăн тĕттĕмре йĕс шăнкăрав
Чун-чĕрене пырса кĕрет салхулăх.
Ŷлеççĕ выçă кашкăрсем вăрах.
Масар пек шăпланать сасартăк улăх.
Шуçать кĕтŷ те вут çывăхнерех,
Ертŷçĕ тулхăрать асăрхануллăн.
Шыв вăкăрĕ-ши мĕкĕрет-йĕрет?
Çăтăлтатса илет, сŷнес пек, çулăм.
Шевле çиççе каять те анăçра
Кĕмсĕртетет тем инçетре пĕр хушă —
Кисреннĕ евĕр çĕр çак вăхăтра.
Тен, вăрçă çывхарать?! Епле хăрушă!..
Хĕветĕр ĕмпичче те ыйхинче
Асаплăн йынăшса илет, тем пулнăн.
Сиксе тăрать.— Э-э, аслати... Инçе...
Кунта çитеймĕ — вăйĕ чакнă унăн...
Иркŷлĕм вилесле çиес килет —
Ăша ĕнтсех ярать вучах кăварĕ...
Ак шуçăм хĕрелет — часрах киле!
Аннеçĕм ман валли, тен, сĕт хăварĕ...





## XV

...Ун чух çу çитрĕ выçă-тутăлла...
Тавах тăван çĕре!— вăл тараватлăн
Парнелесе кĕпçе, кăмпа, çырла,
Çăлса хăварчĕ вилĕмрен — сыватрĕ.
Мухтав çĕр панă чĕрлĕх сĕтекне! —
Ӳтри юна вăл сивĕнме памарĕ...
Куратăп та ак тырă пиçнине —
Чун савăнать: çĕн çăкăр пулĕ мар-и!
Утсем те самăрланчĕç майĕпе
Ака-суха туса кăшт каннă майăн.
...Ак çумăр чашлаттарчĕ. Çул йĕпе.
Татах шăваççĕ пĕлĕтсем нумайăн.
Эппин, паян тухаймĕç ут çулма —
Эппин, анне çырла татса килеймĕ...
Е васкатас та мар-и утçăма?
Шуралнă евĕр темшĕн ир илемĕ...
Анчах хĕвел куç уçнă самантрах
Хĕмленчĕ ăшшăн асамат кĕперĕ.
Ун айĕн, çумăра пăхмасăрах,
Тăри янравлă кĕвĕ кĕвĕлерĕ.

## XVI

— Лаша çын евĕр ăслă та ĕçчен,
Хресченшĕн тус та, ĕмĕтри илем те,—
Час-час астутаратчĕ ĕмпиччем,—
Ан мантăр çын ăна, ялан илентĕр...
Пĕл: лашасен те йăх тымарĕ пур,
Мăн асанне, мăн асатте тени те...
Çак кĕтӳре миçе ăрат тен? Кур:
Пур кăвакки, хури, пур çӳренни те...
Ак — шур кĕсре: ун юнĕ пит таса.
Ак — хура турă: ун юртти пит тикĕс.
Ку — тимĕр кăвакки — кӳлсен, асать.
Ак çак хăли — виç кашкăр урлă сикĕ!
Пурли вара вăл — пуринчен вăйли:
Мĕн чухлĕ тиесен те — чăхăмламĕ.
Хушка çамка çăрха — чи чăтăмли:
Çар урхамахĕ пулнă унăн амăш...
...Улма чăпарăн ăслă кусĕнче
Пур пек те туйăнатчĕ ăшă туйăм,
Ун сĕм-кăвак таса тĕкĕрĕнче
Сăнарлăн курăнатчĕ савнă уйăм...

## XVII

Урать-ха вăрçă — унăн хурлăхне
Сарать çухатусен хура хыпарĕ...
Çанталăк та сасартăк кĕр енне,
Такам васкатнăн, сулăна пуçларĕ.
...Пучах пухатпăр хăмăл хушшинчен
Эпир, аттесĕр ачасем, вар тăрăх,
Курас пулсан, лекет хуралçинчен:
Вăл — пит хаяр, тытсан, мăя та пăрĕ...
Çŭретпĕр вăрăсем пек йăпшăнса.
Сасартăк — юланут! Ак, çитрĕ! Çитрĕ!
Ак таптатать!.. Анчах, тăп чарăнса,
Кĕçенчĕ ăйăр ман умрах... Тем сисрĕ?
Улма чăпар?! Палларĕ-шим мана?
Чĕвен тăрса, юланутça ŭкерчĕ —
Çиллессĕн çыртрĕ, тапрĕ... Вăрмана
Пуçне ухса ман хыççăн ĕрĕхтерчĕ...
Хуралçă çухăрашрĕ юнаса:
— Чим, таврăн-ха — чĕн пушăсем ăс парĕç!
...Черечĕ çитрĕ пуль — Çилçуната
Часах, таканласа, вăрçа ăсатрĕç.

## XVIII

Салхуллă пулчĕ пирĕн уйрăлу.
Пите çунтарчĕ урхамах куççулĕ.
— Чипер кай... Ан пăрлантăр кăмălу.
Калле илсе çитертĕр кайнă çул-йĕр.
Тĕл пулăн эс унта, тен, аттене —
Аманнă хыççăн вилĕмрен хăтарăн,
Тăван çĕршывăмран фашист йăхне
Таканупа тапта-тапта хăвалăн...
...Васкарĕ вăрăм пуйăс анăça —
Ак илтĕнмест сасси те, кăшкăртни те...
Епле-ха утçăм тухĕ манăçа?!
Вăл çывăхрах кĕçеннине ак илтрĕм!
Куратăп эп: улма чăпар тиха
Сиккелесе çŭрет уйра!.. Мĕн пулчĕ?!
— Ŭсет... Ак ашшĕне те çитĕ-ха,—
Хĕветĕр ĕмпичче чеен йăл кулчĕ...
...Улма чăпар тиха — ман пĕчĕк тус —
Сана эп юратса пăхса ŭстерĕп.
Чĕвен тăма вĕрен — пуçна ан ус!
Ŭссен, мана хир тăрăх эс вĕçтерĕн...



# XIX



Тăван кĕтес — асаилŭ тĕнчи,
Ачалăх — ун асран кайми юмахĕ.
Унта чĕнет кĕтӳçĕ шăхличи,
Сăрнай кĕвви, сăпка юрри сăмахĕ.
Чан çапнăн авăтса ярать автан,
Çăвать хĕвеллĕ çумăр шăпăр-шăпăр,
Чĕнӳллĕн кĕçенсе тухать таçтан
Поэзи урхамахĕ тăпăрт-тăпăрт.
Епле хитре ун çулăм пек çилхи!
Епле вăрт-варт ун çиçĕм пек çуначĕ!
Хум-юхăм еверлĕ чуппи-çăрхи!
Хĕм сирпĕтет такан!.. Епле-ши ячĕ?
Поэзи урхамахĕ — Çилçунат...
Епле унпа ман туслашасчĕ, теттĕм.
Вут-ĕмĕт çунтаратчĕ ман чуна.
Ах, тутлă тĕлĕк тĕллентернĕ тертĕм!..
Тăван кĕтес — асаилŭ тĕнчи,
Ачалăх — ун чи кăмăллă юмахĕ.
Унта чĕнет асамăç шăхличи,
Чи çепĕç юрăсен кĕвви, сăмахĕ...



# ТУСЛĂХ КĂШĂЛĔ





## I

Пуç кăшăлĕ — паха парне туссемшĕн.
Вунпилĕк уйрăлми юнташ-тăваншăн.
Ăна эп, сăвăç йăлипе, тĕс-сĕмшĕн
Сонет кăшăлĕпе çыхса тăвасшăн.

Хĕвел урхамахне кÿлсе, пĕр çаврăм
Çĕршывăм тăрăх ирĕклĕн çÿрерĕм,
Ун халăхĕсене чунтан эп саврăм —
Тĕл пулнă чух никам сĕнмерĕ эрĕм.

Пур чи хитре çеçке кашни кĕтесĕн,
Кашни чĕлхен ачаш сăмах пур уншăн —
Эп пухрăм вĕсене, тус-йыш кĕтсессĕн:
Йăлт Аслă Пĕрлĕхе çуратнă куншăн!

Епле тăван йыш кăмăлне çĕклемĕ
Асамлă чĕрĕ чечексен илемĕ?!.

## II

Асамлă чĕрĕ чечексен илемĕ —
Тăван çĕршыв сăнарĕнчи хаваслăх.
Раççей, пуçа тайса татса илем-и
Сенкер шевлеллĕ çеçпĕлне хаваллăх?

Пур тăкăнми çеçкÿ — ăна та эпĕ
Шур кăлканпа явса çыхатăп меллĕн.
Чĕлхе шутне кура — çеçке хисепĕ:
Кашнин хăй евĕр тĕс пур киленмелĕх.

Раççей, эс çитмĕл халăх килĕ мар-и?
Санпа пĕрле эпир телейлĕ, аслă,
Сан ăшă çĕрÿнте ман йăх тымарĕ,
Санпа ман шухăш анлă та çунатлă...

Эс туслăх кăшăлне илем кÿресшĕн
Çуратнă килĕшÿ чечен тĕссемшĕн.






## III

Ҫуратнӑ килӗшӳ чечен тӗссемшӗн
Ҫӗнелнӗ Казахстанӑн уйӗ-хирӗ.
Тӳпи ун тӗпсӗр — ирӗклӗ вӗҫевшӗн,
Янкарлӑ каҫӗ, пыл тӗтриллӗ ирӗ.

Ҫеремӗсем вӗҫӗ-хӗррисӗр, анлӑ,
Тюльпанӗ — хӗрлӗ, ҫӑлтӑр йӑлтӑрккиллӗ...
Сӑрт хысисем тип эрӗмлӗ, кӑлканлӑ.
Йӳҫенкӗ кӑмӑс евӗр вӑш-вӑш ҫилӗ.

Тӑри — тӳпе акынӗ — вӑрансассӑн,
Туссемпеле ҫеремлӗхе эп тухрӑм —
Янранӑн юрӑ ҫитмӗл ҫичӗ саслӑн
Ҫӗклем ҫеҫке йышпа хаваслӑн пухрӑм.

Тӗс панӑ вӗсене уй-хир илемӗ,
Ҫӗр сӗчӗ, ир тӗтри, хӗвел хӗлхемӗ.

## IV

Ҫӗр сӗчӗ, ир тӗтри, хӗвел хӗлхемӗ
Киргизи ҫеҫкисен сӑнне тӗс кӳнӗ.
Епле ӗлккен вӗсем — татма хӗрхенӗн!..
Кур тикӗт курӑкне — типсен ҫех сӳнӗ!

Пур кӑн-кӑвак хунчав, ыр шӑршлӑ чапӑр,
Вут хыпнӑ мӑкӑнь, сывлӑм сыпнӑ лили...
Кашнин ӗлки хӑй евӗр нӗрлӗ, капӑр,
Тӗк-мамӑклӑ варри — хӗвел шӑркиллӗ.

Хӑшне суйлас? Тус канашне итлетӗп.
Умра — тӳпем ҫаранӗ темӗн талккӑш.
Малтанлӑха пӗрне татса илетӗп:
Вӑл — килӗшӳ ҫеҫки, каҫхи фиалка...

Ун чакӑр куҫӗнче — тӗнче хавасӗ,
Сенкер каҫсен шевли, сив ҫӑлтӑр пасӗ.

21298-чув
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

## V

Сенкер каçсен шевли, сив çăлтăр пасĕ
Çунать Таджикистан çеçки çинче те.
Ту тăррине çитесчĕ те тупасчĕ
Чи хитрине! Анчах — тӳпе инçеччĕ...

Халь — çăлтăрсем лĕпке çинче канаççĕ,
Çӳçе пăслантарса... Çавна пула-и
Ытарайми илемлĕ уçлăх каçĕ!
Пĕлĕтсенчен çӳлте утма пит лайăх.

Ман аллăмра — илем! Шутлатăп: ӳлĕм
Ăна нихçан та тек курайман эсĕ,—
Пуç кăшăлĕ валли пит килĕшӳллĕ
Япшар туссен парни — ту эдельвейсĕ...

Сыв пул, тӳпе! Чĕнсе мĕлтлетрĕ мар-и
Сип-симĕс айлăмри кăвайт кăварĕ!..



## VI

Сип-симĕс айлăмри кăвайт кăварĕ,
Патне çитсессĕн, роза тĕмĕ пулчĕ!..
Узбекистан ман ĕмĕте ырларĕ —
Ун парнинче темле чечек те пурччĕ.

Çĕрмамăк папкисем, нарцисс, шур астра,
Черченкĕ ненюфар, мирт, орхидейă...
Лĕп çумăр туслăх кăшăлне юратрĕ —
Сĕм-суккăр та ăна «чипер-çке!» тейĕ.

Тӳпен хĕлхем çилхеллĕ урхамахĕ
Чĕвен тăрсан, татах çула эп тухрăм.
Умра — Туркмени. Чăн-и ку, юмах-и —
Пушхир ейĕвĕнче эп лотос пухрăм!..

Ун хĕрхĕм çеçкинче йăлтăртатмасть-и
Тин ӳкнĕ юр пĕрчи пек хĕм алмазĕ?!.



## VII

Тин ӳкнĕ юр пĕрчи пек хĕм алмазĕ
Азербайджанăн розине тĕрленĕ.
Ун çырăвĕ çинче хăш вăхăт асĕ?..
Салам, Кавказ — мухтавлă туслăх енĕ!

Сăрт-ту çĕршывĕнче чечек сахал-и?!
Вĕсем пуçне таяççĕ, эп таятăп,
Те çавăнпа кунта хама эп халĕ
Çурхи садри пыл хурчĕ пек туятăп.

Нефть тĕслĕ астра, крокус, хризантема
Нихçан шанми пуç кăшăлĕшĕн селĕм.
Самшит тураттине те тĕссĕр темĕн —
Ялан вăл ешĕл, йăлтăркка çӳçеллĕ...

Çак ен çуткăçĕнчен çуралнă мар-и
Çеçке кӳлепинчи илем сăнарĕ?!.

## VIII

Çеçке кӳлепинчи илем сăнарĕ
Çӳл ту çинчи юртан тасалăх илнĕ...
Çил, хĕрлĕ мăкăне тайса, юрларĕ:
Кунта хастар çынсем пуç хунă, вилнĕ!..

Каларĕ вата ту: умри çав ванчăк
Тискер ют чĕрисен пăрланнă чулĕ...
Капланнă пĕлĕтсен мĕлки хурланчăк.
Мĕн чухлĕ мăкăнь!.. Чулĕ те мĕн чухлĕ...

Анчах — тавралăх улшăнчĕ, тасалчĕ.
Сар урхамахăм пĕлĕт урлă чупрĕ.
Чи капăр кавирне Армени сарчĕ —
Хастут та, хамаспюр та маншăн тупрĕ...

Çуталчĕ пĕрчĕн-пĕрчĕн, ĕнчĕ хывнăн,
Писев пек вĕт тусан çинчи тăр сывлăм.

## IX

Писев пек вĕт тусан çинчи тăр сывлăм
Типменччĕ, куç умне тухсассăн Грузи.
Тăшман тесен, çӳл тăвĕсем ун сыхлă,
Туссемшĕн чун-чĕри хăçан та уçă.

Пуç кăшăлĕ ӳсет, çапах та темшĕн
Ĕнерсĕр пек вăл чаплă лавр çулçисĕр...
Халь иçĕм сапаки çипленнĕ, ешĕл,
Сипетлĕ çумăр, сывлăш та сив çилсĕр.

Кун вăрăм. Қалчаланнă тин уцуна *.
Пăтранчăкчĕ те тăрăлать Кура та.
— Чипер кай, тус!— тесе, мана ыр сунăр:
Кунтан эп инçетри çула куратăп...

Тĕлленчĕ пек, çил вĕрнĕн вăшăл-вăшăл,
Уй-хир ăрши, çĕре чĕм кĕртнĕ ăшă.

* Уцуна — юр лариччен пĕр кун маларах çурăлакан чечек.



## X

Уй-хир ăрши, çĕре чĕм кĕртнĕ ăшă
Юхать шап-шурă Украина çийĕн.
Қилсем,— чĕнет мана вăл пăшăл-пăшăл...
Тĕрленĕ асаматлă уҥ хапхийĕ.

Тус-йыш çĕршывĕн алăкĕ-мĕн çакă!
Кĕреп те савăнса сăнап, пуç тайнăн:
Акаци ылттăн серепе ак çакĕ,
Каштан хунарĕсем çунма пуçланă!

Тивлетлĕ ен, чĕрӳ патне ил!— тетĕп.
Мĕн чул чечек! Курманнисем пур авă...
Каштан сапакипе пĕрле илетĕп
Упасарри çеçки — телей хуравĕ...

Васкас! Қаç хуралать. Кĕрхи çил сиввĕш
Варсем енчен çывхарнă нӳрĕ сывлăш.



## XI

Варсем енчен çывхарнă нÿрĕ сывлăш
Систерчĕ: хăнана чĕнет Молдави.
Салам!— тесе, ăна сунатăп сывлăх,
Сана — тăванлăх юрăçин мухтавĕ!

Хунавĕ иçĕм йывăççин укаллă,
Пуç кăшăлĕ валли чечек тем чухлĕ —
Пион, бриони, гладиолус, калла...
Епле эрешлĕ Аслă Пĕрлĕх çулĕ!

Ун тăрăх вирхĕн, урхамахăм, вирлĕн —
Туссем умне пырса çитсен, тăп чарăн:
Ҫăшт калаçар та шăкăл-шăкăл, мирлĕн
Ҫартан-картан тăрса ташлар хастаррăн!

Хавхаланма лĕп çумăр, юхнăн ăшшăн,
Пыллатнă чечекре сипетлĕ шăршă...

## XII

Пыллатнă чечекре сипетлĕ шăршă,
Вăрман тĕтри — сĕт пек çăра вăл, шурă.
Вутра упранă чĕрĕ тĕсшĕн, сăршăн
Ҫак пархатарлă çĕршыва тав турăм.

...Янрарĕ чан чуна çурса салхуллăн:
Ку — Шурă Русь, хăюллă халăх килĕ.
Таса тăпра çине чĕр çыхă хунăн
Ҫалатăп: «Ил, вăл — çитмĕл ен çеçкиллĕ...»

Ӑсатнă чух ыр кăмăллă тус-тантăш
Ҫул çутатма ĕшне фиалки сĕнчĕ,
Алла тыттарчĕ шўлкемеллĕ лантăш:
Ҫулçи ук пурçăн, шăрçисем — çут ĕнчĕ...

Тата мĕнпе çак ырлăх тĕлĕнтерĕ?!—
Йăлт туслăх кăшăлне эрешлентерĕ.

## XIII

Йӑлт туслӑх кӑшӑлне эрешлентерӗ —
Литва левкойӗ, Латви бальзаминӗ...
Пехетсӗр мар ку ен — тем те ӳстерӗ!
Тӳпе шевли, тен, ҫакӑнта тӗс илнӗ?

Пуҫ кӑшӑлӗ пекех кӑвак хуппи те:
Те манӑн хитререх, те вӑл — пӗлместӗп...
Чӑнах та, тӗсӗсем ун хӳхӗм питӗ,
Анчах ҫӗр ҫеҫкисем кая теместӗп!

Ҫук, ҫук! Янтарлӑ роза капӑр мар-и
Е тӑрӑ кӳлӗсен сар кӳкӗрченӗ?!
Тӑван Эстонин пур сӳнми кӑварӗ —
Ӑна вӑл «кӑвакарчӑн куҫӗ» тенӗ...

Каҫ пулчӗ. Эп те: «Кӑшӑл хатӗр!»— терӗм.
Тӑван ҫӗршыв унпа уяв ирттерӗ.



## XIV

Тӑван ҫӗршыв унпа уяв ирттерӗ —
Мухтав кӑшӑлӗпе!.. Тен, шеп пулмарӗ
Ман ҫаврӑм — тус тиркемӗ, килӗштерӗ:
Сӑвва аваллӑх форми хӗсрӗ мар-и...

Вунпилӗк пӗртӑван, эпир пӗр танлӑ —
Вунпилӗк кӑшӑл ҫыхӑнса пӗр пулчӗ:
Вӑл хӑй те, капӑрскер, ҫӗршыв сӑнарлӑ —
Унра пур халӑхсен халалӗн шучӗ...

Мана «эс — чӑрсӑр» темӗ-ши тус-йышӑм:
Раҫҫей ячӗпеле унпа пиллешрӗм...
Шӑп ҫаванӑн ӑна пуҫ тайнӑ: «Йышӑн!»,
Пӗр ҫемьене ӗмӗрлӗхе пӗрлешнӗ...

Халь эп «Ҫӗршывӑм сывӑ пултӑр!» тесшӗн...
Пуҫ кӑшӑлӗ — паха парне туссемшӗн.



## XV

Пуç кăшăлĕ — паха парне туссемшĕн:
Асамлă чĕрĕ чечексен илемĕ!
Çуратнă килĕшӳ чечен тĕссемшĕн
Çĕр сĕчĕ, ир тĕтри, хĕвел хĕлхемĕ.

Сенкер каççен шевли, сив çăлтăр пасĕ,
Сип-симĕс айлăмри кăвайт кăварĕ,
Тин ӳкнĕ юр пĕрчи пек хĕм алмазĕ —
Çеçке кӳлепинчи илем сăнарĕ.

Писев пек вĕт тусан çинчи тăр сывлăм,
Уй-хир ăрши, çĕре чĕм кĕртнĕ ăшă,
Варсем енчен çывхарнă нӳрĕ сывлăш
Пыллатнă чечекре сипетлĕ шăршă —

Йăлт туслăх кăшăлне эрешлентерĕ!
Тăван çĕршыв унпа уяв ирттерĕ.

15 пус.

